Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

73 (7927) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 21-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ял аталанăвĕшĕн



Çĕр ĕçченĕсемпе тачă çыхăнура

*Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре Перекет банкĕн Чăваш уйрăмĕн Мăн Сĕнтĕрти хушма офисĕн ĕçченĕсене куратăр. Офис ертӳçи Владимир Иванович Николаев (варринче) кĕске калаçура хăйсен ĕç пĕлтерĕшне çапла хакларĕ: «Ял çыннисен ыйтăвĕсене перекет банкĕн услугисемпе туллин тивĕçтерсе вĕсене аталану çулĕнче тĕкĕ парасси – пирĕн тĕп тĕллев. Ялта пурăнакансем пирĕн пата йышлăрах килме пуçларĕç. Апла пулсан вĕсем перекет банкĕн ĕçĕпе кăмăллă. Ку вара пире те куллен шыравра пулма хистет». Пысăк опытлă специалистпа пĕрремĕш кун мар пĕрле ĕçлекен Елена Анатольевна Замкова (сулахайри) тата Надежда Федоровна Минина контролер-кассирпа ял çыннисен кашни ыйтăвнех вăхăтра татса параççĕ.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

## Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ

Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вăй хуракансем кĕрхи йĕпе-сапа çанталăкăн кашни уяр вăхăчĕпе туллин усă курса хирти пурлăха кĕлете кĕртсе хурассипе тăрăшаççĕ. Çакăнта çаврăнăçуллă тата пуçарулла пулнисене ырламалла кăна.

Авăн уйăхĕн 20-мĕшĕ тĕлне район администрацийĕн ял хуçалăх пайне тăратнă оперативлă кăтартусене ĕненес пулсан паян çĕр ĕçченĕсем тĕп вăйсене çĕр улми кăларса пуçтарса кĕртес ĕçсене яватăрнă. Ĕнерхи кун тĕлне «иккĕмĕш çăкăра» районта пĕтĕмпе 203 гектар çинчен (15,8 процент) пуçтарса кĕртнĕ. Малтанхи кăтартусемпе вăтам тухăç гектар пуçне 137,2 центнерпа танлашать. Ĕçсене оперативлă пурнăçлакансен вара кăтартусем те пысăкрах. Акă, тĕслĕхрен, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче асăннă кун тĕлне çĕр улми 60 гектар çинчен (75 процент) пуçтарса кĕртнĕ. Вăтам тухăç кунта 175 центнерпа танлашать.

Çĕр улми кăларассипе çавăн пекех «Восток», «Оринино», «ДаАн», «ВаСем», «Ударник» хуçалăхсем ăнăçлăрах ĕçлеççĕ. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен илсен «иккĕмĕш çăкăр» кăларассипе А. Афанасьев, А. Пихтеров, В. Бархаткин, А. Толстов хуçалăхĕсем ĕçсене кал-кал йĕркелене палăртмалла.

«Свобода» тата «ВаСем» хуçалăхсенче ытти ĕçсемпе пĕрлех пахча çимĕç пухса кĕртессипе те тимлеççĕ.

**А. БЕЛОВ.**

## Хаксем тимлĕхре

Черетлĕ лару

***Çак кунсенче район администрацийĕнче социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕсене тĕрĕслесе тăракан комиссин черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ.***

Район территорийĕнче ваккăн сутмалли таварсен 80 – 85 процентне Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем сутаççĕ. Апла пулсан тавар хакĕн вылявĕ вĕсенчен чылай килет. Правительство шайĕнче социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар перечение йĕркеленĕ. Унта чи пĕлтерĕшлĕ куллен кирлĕ тăхăр тĕрлĕ продукта кĕртнĕ. Райпо лавккисенче вара перечени тавар хакне ценник тĕсĕсенчен уйăрма пулать. Социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар халăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кура тата саккуна килĕшӳллĕн пĕчĕк наценка тумалла, ăна пĕр сăлтавсăр ӳстермелле мар.

Ларăвăн малашнехи ĕçне район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçин тивĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Н.М. Костина тăсрĕ, районти социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕсем тĕлĕшĕнчи лару-тăрупа паллаштарчĕ, çитменлĕхсене пĕтермеллине, халăх ыйтăвне тĕпе хурса çĕнĕлĕхсене вăя кĕртмеллине палăртрĕ.

– Социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар тĕп вырăнта пулнине шута илсе вĕсен хакĕсене эпир кашни эрнере тĕрĕслесе тăратпăр. Сутуилӳ точкисенчи çакăн йышши тавара хакне пĕр сăлтавсăр хăпартса сутни, тавар туянакан прависене ирĕксĕрлени ан пултăр тесе тăрăшатпăр, – терĕ Н.М. Костина ларăва пухăннисене куллен пурнăçлакан ĕçпе паллаштарнă май. Экономика пайĕн ĕçченĕсем кашни эрнере суту-илӳ точкисенчи хаксене тишкереççĕ. Ăна район хаçачĕ çине пичетлетпĕр. Çавăн пекех вĕрентӳ тата сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем валли туянакан апатçимĕç продукчĕсен хакĕсене кашни эрнере контроллеççĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕ хамăр республикăра туса кăларнă экологи енчен таса та пахалăхлă продукцие халăх умне ытларах та ытларах кăлармаллине палăртрĕ. Халĕ ку енĕпе райпо лавккисем çине тăрса ĕçлеççĕ. Унăн хушăвне тĕпе хурса çавăн пекех ятарлă комплекслă программăпа килĕшӳллĕн районта «Органика» апатçимĕç лавкка сечĕ уçма палăртрĕç.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕсен ертӳçисем хăйсен суту-илӳ точкисенчи ĕç-хĕлпе паллаштарчĕç. Çавăн пекех ларăва суту-илӳ ĕçне ертсе пыракан ытти ĕçченсем хутшăнчĕç.

Ларăва хутшăнакансем ĕçе пĕтĕмлетнĕ май малашне те социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакне çирĕп контроллемеллине, йĕркене пăсакансенчен çирĕп ыйтмаллине палăртрĕç. Çавăн пекех ĕç ушкăнĕн ларăвĕ тата унти тĕрлĕ йышăну пирки халăха хаçат урлă пĕлтермеллине йышăнчĕ, лавккасенче «Покупай Чувашское» стикерлă продукцие анлăрах сутма тата ку тĕлĕшри ытти ĕçе пурнăçлама сĕнчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн августăн 30-мĕшĕнчи 869 № йышăнăвĕпе «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» уçă акционер обществин тĕп бухгалтерне **Людмила Поликарповна ИВАНОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессин сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн сентябрĕн 13-мĕшĕнчи 938 № йышăнăвĕпе Муркаш райповĕн «Радуга» кафе аслă поварне **Тамара Ивановна КОЛБАСОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Республикăра

## Спортпа пресса фестивалĕнче

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Шупашкарти «Олимпийский» стадионта «Советская Чувашия» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн эстафета кăçалхипе 73-мĕш хут иртрĕ. Унта икĕ пин ытла çын хутшăнни паллă.

Пирĕн районти пилĕк команда çак ăмăртура вăй виçрĕ: район администрацийĕн, ветерансен, Калайкассинчи вăтам, Шетмĕпуçĕнчи тĕп шкулсен тата «Çĕнтерӳ ялавĕ» райхаçат редакцийĕн командисем. Пурте финиша япăх мар результатсемпе çитме пултарчĕç.

Район пуçлăхĕ И.В. Николаев та эстафетăна хутшăнчĕ. Республика Президенчĕ М. Игнатьев ертсе пыракан VIP чупура хăйне тĕрĕслерĕ, тĕслĕх кăтартрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Информаци кунĕ

## Коллективсенче пулса курăççĕ

Паян районта черетлĕ информаци кунĕ иртет. Республика представителĕсем районти ответлă ĕçченсемпе пĕрле ушкăнсене пайланса Юнкă, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр, Ярапайкасси, Чуманкасси ял тăрăхĕсене çитсе курăççĕ, вĕсен территорийĕсенчи ял хуçалăх, сывлăха сыхлас ĕç, вĕрентӳ предприятийĕсенчи тата ытти ĕç коллективĕсемпе тĕл пулаççĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕн теми – Чăваш Республикин «О внесении изменений в Закон Чувашской Республики «О республиканском бюджете Чувашской Республики на 2011 год и на плановый период 2012 и 2013 годов» Саккунне пурнăçа кĕртсе пыни çинчен; кĕрхи уй-хир ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен тата Чăваш Енĕн муниципаллă йĕркелĕвĕсенче ял хуçалăх продукцийĕн ярмăрккисене ирттересси çинчен; Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕсене хатĕрленес ĕçсем мĕнле пыни çинчен; Чăваш Енри ЕДДС служби мĕнле ĕçлесе пыни çинчен.

Пенси ыйтăвĕсемпе

## Соцпакет е укçа? Шухăшласа пăхăр

***Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен 2012 çул валли ку ыйтăва октябрĕн 1-мĕшĕччен татса парас пулать***

Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракан хăйĕн халыхи йĕркине улăштарасшăн пулсан кăна заявлени çырмалла. Калăпăр, вăл халĕ çăмăллăхсем вырăнне укçан илсе тăрать тейĕпĕр, анчах та çитес çултан çăмăллăхсемпе усă курма пуçăнасшăн е тепĕр май. Пенсионер çăмăллăхсемпе усă куракан халыхи йĕркене улăштарасшăн мар пулсан унăн Пенси фондне пыма кирлĕ мар.

2011 çултан тытăнса федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен социаллă услугисем 3 пайран тăраççĕ. Кусем вĕсем эмел, санаторипе курорт тата транспорт пайĕсем. Соцпакет пĕтĕмĕшле 750 тенкĕ те 83 пуспа танлашать. Вăл шутран эмел пайĕ (тухтăр рецепчĕпе эмел тӳлевсĕр илесси) – 578 тенкĕ те 30 пус, санаторипе курорт пайĕ (тухтăр сĕннипе санатори кайма путевка илесси) – 89 тенкĕ те 46 пус, транспорт пайĕ (хула тулашĕнчи поездпа тӳлевсĕр çӳресси, сиплёнме тӳлевсĕр кайса килесси) – 83 тенкĕ те 07 пус.

Çулталăк пуçланнăранпа районĕпе соцпакета пачах е унăн пĕр пайĕпе усă курма пăрахасси пирки 128 заявлени йышăннă. Вĕсенчен ытларахăшĕ 2011 çулта укçан илсе тăма тытăннисем. Укçа вырăнне соцпакетпа пăхнă çăмăллăхсемпе е вĕсен пĕр пайĕпе çĕнĕрен усă курма пуçăнасси пирки 38 заявлени пулчĕ.

Паянхи куна пирĕн районта федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем (Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕсемпе участникĕсем, çапăçусене хутшăннă ветерансем, вăрçă ветеранĕсен тăлăх арăмĕсем, радиаци катастрофисене пула шар курнă граждансем) 3 пин çын ытла. Вĕсенчен 84 проценчĕ çăмăллăхсем вырăнне укçан илсе тăрать.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Саламлатпăр



Хаклă та юратнă мăшăра, аннене, асаннене, хунямана, ăшă та вашават кăмăллă хисеплĕ çыннăмăра – Исетеркке ялĕнче пурăнакан **Зоя Григорьевна АНДРЕЕВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр, ачусемпе, мăнукусемпе, мĕн пур тăванусемпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Ырă кăмăлушăн, пире яланах пулăшса йĕркелесе пынăшăн тав тăватпăр. Çак кунсенче хĕрĕн Ольăн та çуралнă кунĕ, ăна та саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, çĕр çинчи мĕн пур ырă сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, сывăх тăванĕсем.**



Юратнă аттене, хаклă мăшăра, ывăла, пиччене – Чемей ялĕнче пурăнакан **Валерий Владимирович ВАСИЛЬЕВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ашшĕпе амăшĕ, сывăх тăванĕсем.**

Çырăнтару

## Хаклă вулакансем!

**Райхаçата малалла çырăнтараççĕ. Октябрь уйăхĕнчен илсе тăма çыхăну уйрăмĕн ĕçченĕсемпе тĕл пулма васкăр.**

# Тĕп ыйту – хĕле хатĕрленесси

Хĕле кĕрес умĕн

***Çуртсене хутса ăшăтмалли тапхăр çитиччен вăхăт нумаях юлмасть. Ку енĕпе хатĕрленӳ ĕçĕсем епле шайра-ха? Мĕнле ĕçсем туса ирттернĕ тата кая хăвармасăр туса ирттермелле? Çавăн пирки каласа пама ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, райадминистрацин капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхне Владимир Германович НИКИТИНА.***

**– Владимир Германович, çанталăк ир-каç сивĕрех те сивĕрех. Кĕрхи кунсем çапла ĕнтĕ. Апла пулсан çак ыйтупа интересленни те вырăнлă пулĕ тетĕп: мĕнле кĕтсе илет районти коммуналлă хуçалăх системи çуртсене хутса ăшăтмалли тапхăра?**

– Çапла, çуртсене хутса ăшăтмалли тапхăр пуçăниччен шутлă кунсем юлаççĕ тесен те тĕрĕсех. Ăна хатĕрленсе кĕтсе илессипе сахал мар ĕç пурнăçланă ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшле хатĕрленӳ ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Коммуналлă хуçалăх комплексĕн организацийĕсен етӳçисем пĕлтернĕ тăрăх шкулсем, ача сачĕсем, больницăсем тата ытти социаллă сфера объекчĕсем пĕтĕмĕшле илсен 2011–2012 çулсенчи хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕр темелле. Ятарлă комисси членĕсем вĕрентӳ учрежденийĕсен 26 котельнăйне, коммуналлă хуçалăх комплексĕн 14 котельнăйне вырăнсене тухса тĕрĕслевсем ирттерни те çавна çирĕплетсе парать.

Çапах та çавна та каласа хăварас пулать. Юлашки вăхăтра Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ хăйĕн ĕç кăтартăвĕсене палăрмаллах хавшатрĕ. Çавна май асăннă предприяти котельнăйĕсене хутса ăшăтмалли тапхăр валли хатĕрлесси те кирлĕ шайрах пулса пыраймарĕ.

**– Анчах та хĕле хатĕрленесси вăл котельнăйсене йĕркене кĕртсе çитересси кăна мар вĕт-ха. Нумай хватерлĕ çуртсенче юсав ĕçĕсем туса ирттересси, çуртсенчи ăшă узелĕсене, ăшă парса тăмалли системăсене юсасси-хатĕрлесси пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Тĕрĕсех, пурăнмалли çурт-йĕр фондне хатĕрлесси те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ăна аван ăнланатпăр. Юлашки вăхăтри çумăрлă çанталăк çуртсен çийĕсене юсассипе кăштах чăрмав кӳчĕ пулин те, ку ĕçсем те анлă сарăлнă. Мĕн палăртнине вăхăтра пурнăçласа пĕтеретпĕрех.

Пĕтĕмпе вара пирĕн кăçал çуртсен çийĕсене 5037,6 тăваткал метр капиталлă юсамалла, путвалсенче 513 тăваткал метр юсав ĕçĕсем туса ирттермелле, çуртсен фасачĕсене 573 тăваткал метр юсамалла тата ăшă тытакан тумалла.

Пурне те паллă, шыв пăрăхĕсем чылай çĕрте кивелсе çитнĕ. Çавна май вĕсене юсассипе тата çĕнĕрен улăштарассипе чылай ĕç пурнăçлама тивет. Акă çак вăхăта Муркашра Октябре 50 çул урамри 40-мĕш çуртра шыв пăрăхĕсене çĕнĕрен улăштаратпăр. Çуррине яхăн пурнăçланă ĕнтĕ кунти ĕçсене.

Çак урамри 44-мĕш çуртăнне вара тĕтĕм çулĕсене, шыв пăрăхĕсене юсасе ĕçсене вĕçлерĕмĕр.

Гагарин урамĕнчи 20-мĕш çуртра та шыв пăрăхĕсене çĕнĕрен улăштартăмăр.

Хальхи вăхăтра икĕ объектра нумай хваттерлĕ çуртсен çийĕсене юсас ĕçсем пыраççĕ. Кусем вĕсем Москакассинчи Зеленая урамри 2-мĕш тата Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 12-мĕш çуртсем. Асăннă объектсенче ĕçсене вĕçленĕ май ытти çĕрте те çуртсен çийĕсене юсама пуçăнатпăр.

Çавна та каласа хăварасшăн. Çуртсен çийĕсене юсанă çĕрте хальхи çĕнĕ материалсемпе усă куратпăр. Кусем вĕсем «F 1,2 пластофил» тата «МП-20» маркăллă профилированнăй лист. Вĕсем унччен усă курнă материалсенчен тӳсĕмлĕрех те, çирĕпрех те.

**– Коммуналлă хуçалăх системине хăш тапхăра кĕркуннехи-хĕллехи кунсем валли хатĕрлесе çитерме палăртнă-ха?**

– Хатĕрленӳ ĕçĕсене пĕтĕмĕшле октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме пăхнă. Сентябрĕн 16-мĕшĕнче ятарлă ĕç комиссийĕ Муркаш районĕн энергетика тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсене вырăна тухса тĕрĕслерĕ. Унта Атăл тăрăхĕнчи Ростехнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн представителĕсем те хутшăнчĕç. Тĕп ыйту – хĕле хатĕрленесси. Тĕрĕслев итогĕсем тăрăх энергетика тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсен шайне кăтартакан ятарлă паспортсене комисси членĕсем алă пуснă. Çапла вара вĕрентӳ учрежденийĕсен 26 котельнăйĕ, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн 5 котельнăйĕ алла паспортсем илчĕç ĕнтĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Ĕçлĕ çул çӳрев

# Муркаш тăрăхĕнче – Вена профессорĕ

Çак кунсенче Муркаш районне сумлă хăнасем килсе кайрĕç. Вĕсен шутĕнче Швейцарире çуралса ӳснĕ, халĕ Вена университетĕнче ĕçлекен Андреас Каппелер профессор, «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ А.П. Леонтьев тата Кооператив институчĕн профессорĕ, истори наукисен докторĕ Л.А. Таймасов пулчĕç.

Сумлă хăнасен ĕçлĕ çул çӳревĕ районти историпе краеведени музейĕнчен пуçланчĕ, ăна район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова ертсе пычĕ.

Вена университечĕн профессорĕ «Россия – многонациональная империя. Возникновение. История. Распад» кĕнеке тата тĕнчипе паллă чылай ытти ĕç çырса халăх умне кăларнă. Андреас Каппелер – Вăтам Атăл тăрăхĕнчи халăх историне тĕпченĕ ĕçĕн доктор диссертацийĕн авторĕ. Профессор пирĕн тăрăха килни вара ахаль мар.

– Эпĕ 1970 çултан пуçласа пĕр пысăк кĕнеке каларассипе ĕçлетĕп, унта чăваш халăхĕн историне те кĕртес тетĕп. Çавăнпа та чăваш тăрăхĕпе тĕплĕнрех паллашас, аваллăх управне, чăваш халăхĕн ĕç-хĕлне хам куçпа курас килчĕ, – терĕ чылай çул Германире те ĕçленĕ профессор.

Пирĕн района киличчен паллă профессор Чăваш Республикинчи ытти районсенче пулнă, чăваш халăхĕн тĕрлĕ йăли-йĕркипе, ĕçĕхĕлĕпе тĕплĕн паллашнă.

Чăваш халăхĕн историне тĕпчесе Л.А. Таймасов та сахал мар ĕç çырса пичетленĕ. Андреас Каппелерпа вара вĕсем чылайранпа ĕçлĕ çыхăнура. Леонид Александрович 2003 çулта Вена университетĕнче стажировкăра пулнă. Вăл Урал, Вăтам Атăл тăрăхĕнчи халăх историйĕпе чылайранпа кăсăкланать.

– Мана чылай тăрăхра пулма тӳр килчĕ. Чăваш тĕпленнĕ кашни вырăн хăйне май кăсăклă, – терĕ Л.А. Таймасов Муркаш тăрăхĕнче пулнă май.

Аякран килнĕ Андреас Каппелера чăваш йăли-йĕркине, ĕç-хĕлне сăнланă залсем уйрăмах кăсăклантарчĕç. Чăваш халăх тумĕ хăйне евĕрлĕ тата кăткăс, тум çинчи кашни эрешĕн хăйĕн пĕлтерĕшĕ, историйĕ. Паллă профессоршăн пĕлмелли кунта сахал мар пулчĕ. Çавăн пекех сумлă хăнасем Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи музейра пулчĕç. Кашни музей вара хăйне май кăсăклă. Чăваш çĕрĕпе çыхăннă интереслĕ саманатсем паллă профессор кĕнекинче тивĕçлĕ вырăн йышăнĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

ОАО «ГАЗПРОМ» ФИЛИАЛ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»

## ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ

**УВЕДОМЛЕНИЕ**

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что на территории Моргаушского района находятся магистральные газопроводы (МГ) и газопроводы-отводы (далее по тексту - газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см². Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не мене 0,8 метров.

«Правилами охраны магистральных трубопроводов», утв. ГГТН РФ 24.04.92г. (внесены дополнения 23.11.94 г), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м (по суше) и 100 м (для подводных переходов) в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории района газопроводов составляет от 100 метров до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно - измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность - от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

д) производить геологосьемочные, геолого - разведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации - собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в РФ»).

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования или повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласоваться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителя Чебоксарского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу:

428027, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел. 8-(835) - 30-54-09, 30-54-22.

# Пенсисене финансласси пирки

Ыйту-хурав

**– Енчен те граждансен пенсин пухăнакан пайĕ çук пулсан вĕсем патшалăх пенсисене финансласси программине хутшăнма пултараççĕ-и?**

– Çапла, кун пек май пур. Обязательнăй пенси страхованийĕ енĕпе пенсин пухăнакан пайĕ çуккисем те Программăна хутшăнма, хăйсен ирĕкĕпе хушма тӳлевсем тума пултараççĕ. Патшалăх финанслассин йĕркисем ыттисем пекех. Сăмах кунта 1953 çулччен çуралнă арçынсемпе 1957 çулччен çуралнă хĕрарăмсем пирки пырать.

Çапла вара вĕсем хăйсемех патшалăх пулăшнипе хăйсен пухăнакан пенсине йĕркелеççĕ.

**– Енчен те гражданин РФ Пенси фондĕнче харпăр хăйĕн лицевой счетне усман пулсан вăл патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнма пултарать-и?**

– Çапла, вăл Раççей гражданинĕ пулсан пултарать. Анчах та унăн патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнасси пирки заявлени панипе пĕрлех Раççей Федерацийĕн обязательнăй пенси страхованийĕн системинче регистрациленмелле тата обязательнăй пенси страхованийĕн страховани свидетельствине илмелле. Çавна валли РФ Пенси фончĕн хăвăр пурăнакан (прописка тăракан) территори управленине пымалла, хăвăр кам пулнине çирĕплетекен документ (паспорт е çар çыннисем валли çар билечĕ) памалла тата заявлени çырмалла. Пенси фончĕ сире малтанах пенси фондĕнче регистрацилет, обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельствине парать тата эсир Программăна хутшăнассине çирĕплетет.

**– Патшалăх пенсисене финанслассин программине РФ Пенси фондĕнчен пенсин страхланă пайне кăна илсе тăракан çар пенсионерĕсем хутшăнма пултараççĕ-и?**

– Паллах пултараççĕ. Патшалăх пенсисене финанслассин программине Раççейре пурăнакансем пурте, вăл шутра çар пенсионерĕсем те, çар çыннисем те хутшăнма пултараççĕ. Ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ ун чухне Программăна килĕшӳллĕн патшалăх финанслани шучĕпе йĕркеленет.

**– Гражданин хăй прописка тăман вырăнта патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнасси пирки заявлени пама пултарать-и?**

– Программăна хутшăнасси пирки Раççей Федерацийĕнчи Пенси фончĕн кирек хăш территори управленийĕнче те заявлени пама пулать. Енчен те гражданин пĕр вырăнта прописка тăрать, хăй вара урăх вырăнта пурăнать пулсан унăн заявленире Пенси фончĕ унпа çыхăнма пултаракан адреса кăтартмалла. Çакă вăл патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнасси пирки çырнă заявление тивĕçтерни е тивĕçтерменни пирки пĕлтерме кирлĕ. Ытларах чухне пурăнакан вырăна кăтартаççĕ.

Заявление çавăн пекех хăвăрăн ĕç паракан урлă та, трансфер-агент урлă та пама пулать. Спискĕ Раççей Пенси фончĕн сайтĕнче пур. Кунпа пĕрлех патшалăх услугисен интернет-порталĕпе те (www.gosuslugi.ru) усă курма пулать.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Спорт

# Вырсарни кун старта – ватти те, вĕтти те

Сентябрĕн 25-мĕшĕнче районта пысăк спорт уявĕ иртет. Муркашри стадионта çăмăл атлетика енĕпе Олимп чемпионкин Валентина Егорован парнисене çĕнсе илес-сишĕн ăмăрту пулать. Унта пĕтĕмĕшле пĕлĕ паракан шкулсен командисем вăй виçĕççĕ.

Кĕскен: Исетеркке ялĕнче çуралса ÿснĕ Валентина Михайловна Егорова икĕ Олимп ваййине хутшăннă: 1992 çулта Барселонăра Олимп вăййисен чемпионĕ пулнă, 1996 çулта Атлантăри вăйăсенче кĕмĕл призер пулма тивĕçнĕ.

Ытти нумай наградăсемпе пĕрлех ăна «Çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» 2 степень орден медалĕпе те чысланă.

Çак ăмăртупа пĕрлех район шайĕнче Пĕтĕм Раççейри «Наци кросĕ – 2011» чупу та иртет. Сывă пурнăç йĕркине тата спорта аталантарас тĕллевпе массăллă чупăва шкулта вĕренекенсемпе пĕрле ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен, ял тăрăхĕсен командисем те хутшăнаççĕ. Кăçалхи ăмăртура 2005 çулта çуралнă тата кĕçĕнрех-хисен старчĕ те пулĕ. Вĕсен дистанцийĕ – 250 метр. Ветерансем те – 55 çултан иртнĕ хĕрарăмсем тата 60 çултан иртнĕ арçынсем – 300 метрлă дистанцире хăйсене тĕрĕслеме пултарĕç.

Ăмăрту стадионта 11 сехетре уçăлать. Заявкăсене 10 сехет çурăччен йышăнаççĕ. Кашни ÿсĕмри çĕнтерÿçĕне уйрăммăн наградăлаççĕ.

Ăмăрту массăллă спорта явăçтарассипе çыхăннăран унта кашниех хутшăнма пултарать.

Старта тухакансене ăнăçу сунатпăр, спорта юратакансене 11 сехетре стадиона йыхравлатпăр.

# «Характерсем пĕр килмерĕç...»

Çак каларăша ЗАГС пайĕсенче официаллăнах çирĕплетнĕ темелле-ши? Çемьене нипепле те сыхласа хăварма май çук пулсан шăпах çак сăлтавпа мăшăрсем уйрăласси пирки пĕлтерсе заявлени çыраççĕ. Ытларах чухне çак утăма тăвасси пирки хĕрарăмсем шутлаççĕ.

Уйрăлакан мăшăрсенчен çуррине яхăн – пĕрле пилĕк çул таран та пурăнманнисем. Анчах та вĕсен пурин те тенĕ пекех пĕр е икĕ ача. Хыçа юлнă уйăхсене тишкерсе тунă цифрăсем те çавнах калаççĕ: арканнă 37 çемьери çул çитмен 30 ачан малашне тулли мар çемьере ÿсме тивет.

Мăшăр 25–39 çулсенче чухне çемьесем ытларах арканаççĕ. Пирĕн тĕслĕхре – çак ÿсĕмри çирĕм икĕ арçын тата çирĕм пĕр хĕрарăм. 18–24 çулхисем – икĕ арçынпа сичĕ хĕрарăм, 40–49 çулхисем – 7 арçынпа 5 хĕрарăм. 50 çултан иртсен те уйрăлса каякансем пур: 6 арçын тата 4 хĕрарăм.

Пĕлтĕрхипе танлаштарсан кăçалхи сакăр уйăхра арканнă çемьесен шучĕ 27 чухлĕ сахалрах пулни савăнтарать.

Мăшăр суйлас тетĕр пулсан вара малтанах нумайрах сăнăр, ăна туйма вĕренĕр. Çапла вара «характерсем пĕр килмерĕç» темелле те пулмĕ.

**Пичете район администрацийĕн ЗАГС пайĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Европа шайĕнче

# Верăшăн сасăлар!

Европăри çăмăл атлетика федерацийĕсен ассоциацийĕ «çулталăкри чи лайăх спортсмен» тата «хăпаракан çăлтăр» ятсене тивĕçме пултаракан спортсменсен списокне туса хатĕрленĕ. Вĕсен йышне Раççейри тепĕр вун тăватă спортсменпа пĕрле пирĕн ентеш Вера Соколова та кĕме пултарнă.

Аса илтеретпĕр, Вера Раççейĕн хĕллехи чемпионатĕнче тĕнче рекордне тунăччĕ, Европа Кубокĕн ăмăртăвĕнче 20 çухрăм хăвăрт утассипе те çĕнтерÿçĕ пулнă.

Европăри чи лайăх спортсмен кам пуласси вара пирĕнтен те килет. Кашниех http://www.european-athletics.org/european-athlete-of-the-year-nominations-for-2011.html сайтра списокри тивĕçлĕ пилĕк спортсмена палăртса суйлава хутшăнма пултарать.

Çул çинчи инкек

# Туй хыççăнхи синкерлĕ ир

Хальхи вăхăтра ялсенче те чăваш туйĕсем сайра кĕрлеççĕ. Ытларах паллă куна çамрăксем ресторан-кафесенче паллă тума кăмăллаççĕ. Чăваш туйĕ сайраран ĕнтĕ пĕр-пĕр ялта иртекен туй кĕрекине таврари ытти ялсенчен те çитеççĕ.

Акă иртнĕ канмалли кунсенче Анаткас Апаш ялĕнче те туй кĕрленĕ. Çак пысăк ĕçкĕ-çикĕре юнашар ялти çамрăксем те савăннă. Киле вара, Исетеркке ялне, сехет йĕпписем ирхи виçĕ сехет еннелле сулăнсан çеç кайма тухнă. Çăмăл машинăна водительсĕр пуçне тепĕр виçĕ хĕрĕнкĕ çамрăк ларнă хыççăн машина киле çул тытать. Туй кĕрленĕ ялтан тухнă чух, урамăн 1-мĕш çуртĕнчен пĕр 50 метр кайнă хыççăн, çак машина çул варринче выртакан хура «муклашка» урлă каçса каять. Вăл вара... туйра ташланă-юрланă хыççăн киле кайма тухнă Исетеркке çынни пулнă.

Ыйту чылай. Çынна курма май çук пулнă-ши? Урă çын çĕрле çул варринчех выртатчĕ-ши? Тормоз педальне пусма е руле пăрса «муклашка» айккипе иртме май пулман-ши?..

Тĕрĕс хуравсем тупас тесе ку тĕлĕшпе экспертсем тăрăшаççĕ. Хальлĕхе вара руль умĕнчи çамрăка (ăна транспорт хатĕрĕпе çÿрес ирĕкрен кăçал апрель уйăхĕнче хăтарнă пулнă) тата ăна машина шанса панă çынна административлă майпа явап тыттарнă.

**С. ИВАНОВ, районти ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ, полицин аслă лейтенанчĕ.**

Чăваш чĕлхин тасалăхĕ

# Тăван-хурăнташа тĕрĕс чĕнмелле

Мĕн авалтанах кашни халăх тăвана е хăвăнтан асларах тата кĕçĕнрех çынна чĕнме ятарлă сăмахсемпе усă курнă. Чăвашăн ĕлĕкрех пулсан кĕçĕннин аслине ятпа чĕнме юраман. Çакна валли ятарлă терминсемпе усă курнă: атте, анне, асатте, асанне, пичче, аппа, кинемей, тете, мучи тата ытти чĕнÿ сăмахĕсене те.

Хальхи вăхăтра вара чăвашла калас вырăнне – вырăсла, анчах та кун пек чухне те сăмахсен пĕлтерĕшне шута хумаççĕ. Сăмахран, хăвăн аçунтан аслăрах çынна мучи е тете темелле, кĕçĕнреххине – пичче е тете. Çапла калас вырăнне халĕ вырăсла «дядя» тесе калаççĕ те ĕçĕ пĕтнĕ: аслăрах-и вăл, кĕçĕнрех-и – пĕрех пулса тухать.

Хальхи саманара чăвашла атте е анне сăмахсемпе усă курни те питĕ сайра тĕл пулать. Чăвашсен тăхăр вун тăхăр процентĕ ачисене «папа» тата «мама» теме вĕренет. Ак çакăнта хурав та: «Мĕншĕн чăвашсем вырăсланаççĕ?».

Тепĕр тĕслĕх илер. Кил-хуçалăх тирпейлĕхĕ, каçарăр та, туалетран пуçланать тенĕ. Çын патне пырсан тÿрех асăрхатăн: енчен те çавăнтан пуçласа пÿрт патне çитиччен тасалăх курмасан кунта пурăнакансем тирпейсĕр. Чĕлхен те салăхĕ те тăвана тĕрĕс чĕнсе каланинчен пуçланать. Чĕлхе çĕрни, пĕтсе пыни те çакăнтах.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**
**Алексей ИВАНОВ, ЧПУн журналистика факультечĕн студенчĕ.**

Тав тăватпăр

Йÿçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăннă Степан Фронтасьевич Никитина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата пирĕн йывăр хуйхăна пĕрле пайланăшăн Муркашри тĕп больница коллективне, «Ударник» хуçалăх коллективне, «Сывлăх» ФСК коллективне, Муркашри вăтам шкулти 9 «б» класа, пысăк апипе пысăк аттене, юлташсене, тăван-хурăнташа, кÿршĕсемпе ял-йыша тав тăватпăр.

**Никитинсен çемйи.**

Муркашра пурăннă Алексей Михайлович Григорьева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн Муркашри райпо тата ООО «Хлеб» коллективĕсене, почта ĕçченĕсене, «Сывлăх» ФСК директорне А.Н. Куликова, Муркашри район суйчĕн судйине Э.Л. Тарасована, уйрăмах Муркаш райпо председателĕн çумĕнче тимлекен А.А. Куликована, Муркаш шкул учителĕсене В.В. Романована, Н.К. Черновăна, Муркашри сĕт заводĕнче ĕçлекен Р.Е. Михайловăна, тăвансене, юлташсене, ял-йыша, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Григорьевсен çемйи.**

Объявления


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:080901:1287, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:080901, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 13100 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:281001:703, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:281001, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5900 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

ЛЮБИМЫЙ ФУРГОНЧИК
**ТОЛЬКО ОДИН ДЕНЬ РАСПРОДАЖА ОБУВИ**
**ЛЮБАЯ ПАРА ВСЁ ПО 200**
**ПОСТЕЛЬНОЕ БЕЛЬЕ 350 РУБЛЕЙ**
23.09 с 8-13 ч. на рынке в с. Моргауши
23.09 с 14-18 ч. в с. Юнга около ДК





Пĕлтерÿсем. Объявления


**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-5.**



**ОКОННЫЕ СИСТЕМЫ ENWIN**
**ОКНА от 10500 рублей под ключ.**
**Замер. Доставка бесплатно.**
**Тел.: 37-55-39, 8-927-667-55-39.**

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 4-5.**

**ПРОФНАСТИЛ производство и продажа любые размеры (до 14 метров) короткие сроки изготовления (в течение 1 дня) услуги по доставке и монтажу цена от 191,67 руб/кв.м.**
**Тел.: 8-937-393-88-18. 4-4.**

* * *

**СРОЧНО ТРЕБУЕТСЯ ПАРИКМАХЕР. Адрес: с. Моргауши, территория рынка, салон «Магия красоты», рядом с магазином «Парус».**
**Тел.: 8-937-383-02-12.**

* * *

**Продаем комбикорма, зерно. Тел.: 89278435240. 5-5.**

* * *

**Руководитель ищет исполнительного помощника на спокойную работу. Знание ПК не обязательно. Бесплатное обучение. Оплата без задержек. Тел.: 8-953-449-65-64.**

* * *

**Требуются разнорабочие на север. Проезд, питание, жилье бесплатно. Зарплата 40 тыс. руб. в месяц.**
**Тел.: 8-927-858-04-29, 8-903-379-28-64.**

**23 СЕНТЯБРЯ с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей.**


**ООО «ВолгоВятСтройЗаказчик» и администрация Моргаушского муниципального района Чувашской Республики информируют население района, землепользователей, землевладельцев, арендаторов земельных участков и иных лиц, интересы которых могут быть затронуты, о намерении ОАО «Мобильные ТелеСистемы» построить объект: волоконно-оптическая линия связи «Муфта 20_11 Малый Сундырь — БС 21103 Большой Сундырь - Козьмодемьянск».**

**на территории Моргаушского муниципального района, а также извещает о возможном (предстоящем) предоставлении администрацией муниципального образования земельных участков для строительства объекта.**

**Заказчик: Открытое акционерное общество ОАО «Мобильные ТелеСистемы».**

**Исполнитель по оформлению правоустанавливающих и разрешительных документов на линию связи: ООО «ВолгоВятСтройЗаказчик».**

**Предложения и возражения принимаются в письменном виде в ООО «ВолгоВятСтройЗаказчик» по адресу: 603001, Нижний Новгород, ул. Черниговская, д. 11, тел. 8 (831) 437-10-10 (доб. 266), или в администрации Моргаушского муниципального района Чувашской Республики по адресу:429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, 6, тел.:(83541)6-22-36.**

Мăн Хураçкари тĕп шкул коллективĕ шкул директорĕн Т.Г. Ермолаеван хунямăшĕ, шкулта нумай çул хуçалăх ĕçĕсене туса пынă В.И. Ермолаеван амăшĕ

**Степанида Михайловна ЕРМОЛАЕВА**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле хурланни çинчен пĕлтерет.

Сосновкăри тĕп шкул коллективĕ кунта пуçламăш классен учителĕнче ĕçлекен Н.М. Федоровăн шăллĕ

**Николай Максимович ИЛЛАРИОНОВ**

сарăмсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата сывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Турайĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул ют çĕршыв чĕлхи вĕрентнĕ

**Октябрина Семеновна ГАВРИЛОВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Тăванĕсем Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан Валентина Ивановнăпа Виталий Алексеевич Григорьевсен юратнă ывăлĕ

**СЕРГЕЙ**

сарăмсăр вилсе кайнă пирки вĕсемпе пĕрле чун-чĕререн тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Прогноз погоды

| | среда 21 сентября | | | | четверг 22 сентября | | | | пятница 23 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +7 | +7 | +8 | +6 | +3 | +7 | +11 | +7 | +6 | +11 | +12 | +13 |
| Давление мм | 748 | 744 | 743 | 744 | 745 | 746 | 746 | 745 | 743 | 740 | 741 | 738 |
| Влажность % | 96 | 99 | 86 | 94 | 95 | 84 | 51 | 83 | 93 | 100 | 87 | 96 |
| Ветер м/сек | Ю-З 2 | Ю-В 5 | В 5 | С-В 4 | С 3 | С-З 3 | С-З 5 | С-З 2 | Ю 1 | З 2 | Ю-З 2 | З 4 |
| Солнце восход/заход | | 06:35 | 18:56 | | | 06:41 | 18:48 | | | 06:43 | 18:45 | |
| Луна восход/заход | | 23:32 | 15:52 | | | - | - | | | 02:06 | 16:53 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 20.09.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.